***Игнатьева Татьяна Леонардовна***
учитель
МБОУ «Шибылгинская СОШ»
с. Шибылги, Чувашская Республика

## УРОК КОНСПЕКЧӖ «ХИСЕП ЯЧӖСЕН ПӖЛТЕРӖШӖ»

***Аннотаци***: *урокра хисеп ячӗсен пӗлтерӗшӗпе тата вӗсемпе пуплевре тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхнипе паллаштараççӗ. Вӗренекенсем хисеп ячӗсен ыйтӑвӗсене, уйрӑмлӑхӗсене аса илеççӗ, вӗсене сӑмах майлашӑвӗсенче тата предложенисенче тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхаççӗ. Урокра тӗрлӗ ӗç формисемпе усӑ курни: мӑшӑрпа, ушкӑнпа, харпӑр хӑй тӗллӗн ӗçлени – ачасен пуплевне, шухӑшлавне, чӗлхе туйӑмне аталантарма пулӑшать. Урока Пинерпи пукане хутшӑнни, вӑйӑ элементӗсем, тупмалли юмахсемпе ӗçлени вӗренӳ процесне интереслӗ те хаваслӑ тума май парать.*

***Уçӑмлӑ сӑмахсем***: *тӗп сӑмахсем: хисеп ячӗ, пуплев пайӗ, шут, йӗркери вырӑн, пуплеве аталантарни, грамматика, чӑваш чӗлхи.*

## КОНСПЕКТ УРОКА «ЗНАЧЕНИЕ ЧИСЛИТЕЛЬНЫХ»

***Аннотация:*** *на уроке, конспект которого описан в статье, изучается значение имен числительных и формируются навыки правильного их употребления в речи. Обучающиеся вспоминают вопросы, на которые отвечают имена числительные, их особенности, учатся правильно использовать их в словосочетаниях и предложениях. Используются различные формы работы на уроке: в парах, группах, индивидуально, что способствует развитию речи, мышления, языкового чутья учащихся. Участие куклы Пинерпи, игровые элементы, работа с загадками делают процесс обучения интересным и увлекательным.*

***Ключевые слова:*** *имя числительное, часть речи, количество, порядок при счете, развитие речи, грамматика, чувашский язык.*

*Урок теми* «*Хисеп ячӗсен пӗлтерӗшӗ*».

*Тема*. «Хисеп ячӗсен пӗлтерӗшӗ».

*Урок тӗллевӗ*: Хисеп ячӗсем çинчен вӗреннине аса илсе çирӗплетесси.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Воспитани тĕллевĕ*: Тавра курăма, чĕлхе туйăмне аталантарасси.

*Харкамлăх_результачĕсем*: пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни; ача хăй пуплевне сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.

*Предметăн__пайрамлă__результачĕсем*: калаçу тата çыру пуплевне сăнарлăрах тума, хисеп ячĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхни.

*Предметсен_пĕрлĕхлĕ_результачĕсем*: вĕренӳре илнĕ тĕрлĕ пĕлӳпе, хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; măшăррăн, харпăр хăй тĕллĕн, пĕрле ĕçлеме, çынсемпе тĕрлĕ çыхăнăва кĕме хăнăхни.

*Курăмлăх хатĕрĕсем*: компьютер, проектор, пукане, ĕç карточкисем.

*Урок юхăмĕ.*

*I. Класа урока йĕркелесси.*

– Сывлăх сунатăп, ачасем!

– Сывлăх сунатпăр, вĕрентекен!

*II. Урок тĕллевĕпе паллашасси, çĕнĕ темăпа ĕçлесси.*

Учитель сăмахĕ: Ачасем, пирĕн пата паян хăнана çак илемлĕ пукане килнĕ. Сирĕн унпа паллашас килет-и?

– Атьăр, паллашар!

– Эпĕ Пинерпи ятлă. Эпĕ 10 çулта. Эпĕ тăваттăмĕш класра вĕренетĕп. Салам. Хăвăнпа паллаштар?

*(Ачасем хăйсемпе паллаштараççĕ)*

– Ачасем, сирĕн кăмăл мĕнле?

– Манăн кăмăл лайăх!

*(Ачасем хăйсен вырăнĕсене лараççĕ)*

*Учитель_ачасене_ыйтусем_парать, вĕсене_хуравлама_ыйтать*:

– Эсир миçемĕш класра вĕренетĕр?

– Сирĕн класра миçе ача?

– Халĕ миçе ача?

– Миçе арçын ача?

– Миçе хĕр ача?

– Эсĕ миçе çулта?


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

– Паян миçемĕш число?

– Халĕ миçе сехет?

– Эпĕ сире мĕншĕн çак ыйтусене патăм-ши? Кусем мĕнсем? Вырăсла мĕнле пулаççĕ? Паянхи урок темипе çыхăнтарăр?

*(Проблемăлла ситуаци туни. Ачасен хуравĕсене тишкерни)*

– Хисеп ячĕсене усă курма пĕлни пурнăçра кирлĕ-и?

– Сирĕн паян хисеп ячĕсем пирки мĕн çĕнни пĕлес килет?

*(Ачасен хуравĕсем)*

*– Ачасем, эсир мĕнле пуплев пайĕсем пĕлетĕр?*

*(Пуплев пайĕсене аса илни)*

*– Мĕн-ши вăл хисеп ячĕ. Эсир мĕнле шутлатăр?*

*(Пуплев пайĕсем кластер туни).*

– Атьăр-ха учебниксене уçар. Учебник авторĕсем пире мĕн калаççĕ? Эпир тĕрĕс шутлатпăр-ши?

(Учебникри правилăна тишкерни)

– Малтанах ыйтусем çине хуравлăпăр.

*– Мĕн вăл хисеп ячĕ*?

(Япалан шутне, йĕркери вырăнне кăтартакан пуплев пайне Хисеп ячĕ теççĕ)

*– Мĕнле ыйтусем çине хуравлать*? миçе? миçемĕш? миçешер? миçен?

*(Вырăсла мĕнле каланине аса илсе хăварни)*

(Имя числительное – самостоятельная часть речи, которая обозначает число, количество и порядок предметов. Числительные отвечают на вопросы: сколько? который?)

*III. Вĕреннине çирĕплетесси.*

*Пĕрремĕш ĕç.*

*Учебникри 221- мĕш хăнăхтарăва пурнăçлани*

– Ачасем, сире ку ÿкерчĕк тыткăнларĕ пуль? Ÿкерчĕке сăнар…

(Планета ячĕсене хĕвел çумĕнчен пуçласа малалла вырнаçтарса пымалла)



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Пĕрремĕш – Меркурий, иккĕмĕш – Венера, виççĕмĕш – Земля (Çĕр чăмăрĕ), тăваттăмĕш – Марс, пиллĕкмĕш – Юпитер, улттăмĕш – Сатурн, çиччĕмĕш – Уран, саккăрмĕш – Нептун.

*Можно запомнить так*: Мишка Вышел За Малиной –

Юра Смог Удрать Низиной.

*Иккĕмĕш ĕç* (Мăшăрпа карточкăпа ĕçлени)

Предложени йĕркеле, хисеп ячĕсене тĕрĕс кала

Пĕр эрнере 60 кун

Уйăхра 30 сехет

Çулталăкра 365 минут

Талăкра 24 çеккунт

Сехетре 7 минут

*Кану вăхăчĕ*

Шăппăн çĕкленетпĕр

Хумханса илетпĕр.

Алăпа суллашнă хыççăн

Çерçи пек сикетпĕр:

Пĕрре, иккĕ,

Виççĕ, тăваттă,

Сикме чарăнатпăр,

Вĕренме ларатпăр.

*Виççĕмĕш ĕç* (Ачасемпе вăйă евĕр ĕç пурнăçлани)

– Ачасем, пушă вăхăтра эсир Пинерпи патне шăнкăравлама пултаратăр. Халĕ унăн телефон номерне çырса пырăр, ручка илĕр, хут листи илĕр. Эпĕ каласа пыратăп: 8 937 610 2545. Çак номерти цифрăсене эпĕ сăмахсемпе хут листисем çине çырса хатĕрленĕ. Вĕсем сирĕн партăсем çинче. Уçăр. Çавăрăр. Телефон номерĕ йĕркипе тăрса тухăр.

Пулчĕ-и? Тĕрĕслетпĕр. (*Ачасем кашни хăйсен цифрине каласа тухаççĕ* )

– Вăйă вылянă чухне йăнăшсем пулчĕç-и? Эппин пирĕн йăнăшсене пĕтерме мĕн тумалла?


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

– Атьăр- ха лайăхрах ĕçлеме ушкăнсем çине пайланар?

*Тăваттăмĕш ĕç.*

– Тупмалли юмахсенче хисеп ячĕсене тупăр, аялтан пĕр йĕрпе туртăр. Тупсăмне пĕлĕр.

*(Кашни ушкăн пĕр тупмалли юмахпа ĕçлет)*

Тупмали юмахсем:

Пĕчĕк кăна кинĕм пур, пин хут кĕпе тăхăнать. (Купăста)

Пĕр çăмхана пин йĕп чикнĕ. (Чĕрĕп)

Тултан сакăр кĕтеслĕ, шалтан тăват кĕтеслĕ. (Пўрт)

Пилĕк ача лараççĕ, пĕри тепринчен пĕчĕк. (Пўрнесем.)

*IV. Вĕреннине пĕтĕмлетсе хăварасси.*

– Эпир паян урокра мĕн çĕнни пĕлтĕмĕр.

1. Япалан шутне, йĕркери вырăнне кăтартакан пуплев пайне хисеп ячĕ тесе калаççĕ.

2. Хисеп ячĕн тĕп ыйтăвĕсем: миçе? миçемĕш?

– Сирĕн тата мĕн пĕлес килет?

*V. Оценкăсем лартни.*

Тунă ĕççене тĕрĕсленĕ хыççăн кашниех тивĕçлĕ оценкăсем илет.

*Рефлекси*

Эпĕ пĕлтĕм…

Эпĕ шутлатăп…

Эпĕ ĕçлерĕм…



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)